# Хунар ҫути

Итлĕр-ха, итлĕр-ха пурăнакансем,
Уҫăр-ха куҫăрсене, халăхсем!
Сĕм вăрмана кам-ши ҫав янратать,
Кам-ши хунарпа ăна ҫутатать?
Аслати сасси пек унăн сасси,
Уйăх ҫути пек хунарăн ҫути.
Аллипе сулсассăн, сывлăш кĕрлет.
Малалла утсассăн, ҫĕр кисренет.
Вăл сиввĕн пăхсассăн, ҫиҫĕм ҫиҫет.
Калаҫнă чух вилнĕ ҫын чĕрĕлет.
Пур йывăҫсем тăрăх ҫил-шав кĕрлет,
Вăхăчĕ-вăхăчĕпе ян янрать.
Кам пулĕ тетĕр эсир ҫав ҫынна?
Кам хăват парать пулĕ тетĕр ăна?
Эпĕ халĕ пĕлтĕм ĕнтĕ вăл камне:
Сăмахран сисрĕм вĕрентекене.
Ячĕ ҫав ҫыннăн «Тăнлăхуна ҫут»,
Ун хунарĕн ячĕ «Ҫырнă хут».
Танлăх вĕрентет ҫынсене пурăнма.
Йывăр кунта пĕр-пĕрне пулăшма.

*1907-1908*

*Шупуҫҫынни, Н. Хунар ҫути : [сăвă] // Шупуҫҫынни, Н. Суйласа илнисем / Н. Шупуҫҫынни. – Шупашкар, 1958. – С. 118.*